ШЕТМĔ МИХАЛИ

# ЭЛЛИ ЮРЬЕВА АСĂНСА

Çамрăк няня — Елена Петрова
Йăваш хĕрачаччĕ ун чух.
Пысăк çын пек типтерлĕ вăл авă,
Ачана ярăнтарчĕ чуччу.

Ак унтан пахчана илсе тухрĕ,
Эллие аллинчен çавăтса.
Ун валли чечексем татса пухрĕ,
Саррипе шупкине суйласа.

Шкултан инçе мар Шетмĕ шывĕ
Шăнкăр-шăнкăр выляна юхса.
Кĕпертен тăвалла тырă лавĕ
Иртнине Элли тăнă пăхса.

Хăрах енлĕ урам — çичĕ киллĕ,
Тăсăлать çырмаран тăвалла.
Йăмрасен тăррине ăшă çилĕ
Лăпкани те çĕклет кăмăла.

Çак сăнсем Эллие çунат панă,
Çитĕнсессĕн ӳнерçĕ пулма.
Ачаллах çав çула вăл шыранă,
Тупăнсан — унпа пĕлнĕ утма.

Халь Елена Петрова та ватă,
Кулянать Юрьева шеллесе.
— Пĕчĕк чух пăхнипе мухтанатăп, —
Тет çапах иртнине асилсе.

Ман урам — Элли Юрьев урамĕ,
Ун сăнне эп туятăп чунпа.
Çук тесе халь, — никам та каламĕ:
Пурăнать вăл санпа та манпа.

Хулара та ăна асăрхатăп,
Пирĕнпе вăл пĕрле пулнине.
Пысăк çурт тăрринче эп куратăп,
Юрьев тунă чăваш ялавне.